# СӐВАПЛӐ
# ИОАНН ТУРСӐМАХҪӐ АПОСТОЛ
# МӖН ПУР ЁНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ
# ЯНӐ ИККӖМӖШ ҪЫРУ

### 1-мӗш сыпӑк

*Ҫӑлӑнӑҫ*

1 Ватӑ ҫынран – хисеплӗ хӗрарӑмпа унӑн ачи-пӑчи патне. Эпӗ
сире чӑнласах юрататӑп. Сире эпӗ кӑна мар, чӑнлӑхпа пурӑна-
кансем пурте юратаҫҫӗ. 2 Эпир хамӑр ӑшӑмӑрсенчи чӑнлӑха пула
юрататпӑр. Ҫав чӑнлӑх ӗмӗрех пирӗнте пулӗ. 3 Сире, чӑнлӑхпа та-
та юратулӑхпа пурӑнакансене, Атте Турӑран тата Унӑн Ывӑлӗн-
чен Иисус Христос Хуҫамӑртан ырӑлӑх, тивлет, канӑҫлӑх пултӑр.

*Чӑнлӑх тата юратулӑх*

4 Санӑн хӑш-пӗр ачусем, Атте Турӑ хушнӑ пек, чӑнлӑх ҫулӗ-
пе кайнине пӗлсен, эпӗ питӗ савӑнтӑм. 5 Халӗ вара, хисеплӗ хӗ-
рарӑм, санӑн патна темле ҫӗнӗ пил-хушу мар, хамӑр ӗненме
пуҫласанах пӗлнӗ пил-хушӑва ҫырса яратӑп: пӗр-пӗрне юратӑр!
6 Юратни вӑл – Турӑ пил-хушӑвӗсене тытса пурӑнни. Хӑвӑр
ӗненме пуҫласан илтнӗ пекех, ку пил-хушу сире юратса пурӑнма
хушать. 7 Мӗншӗн тесен тӗнчере ултавҫӑсем нумайланчӗҫ. Вӗсем
Иисус Христос ҫӗр ҫине ӳтленсе килнине йышӑнмаҫҫӗ. Ҫавнаш-
кал ҫын вӑл – илӗртсе улталакан, антихрист. 8 Хамӑр мӗншӗн
тӑрӑшнине ҫухатас марччӗ тесе, тулли сӑвап илесчӗ тесе, хӑвӑ-
ра хӑвӑр асӑрханса пурӑнӑр. 9 Христос вӗрентӗвне пӑсакан, ҫав

вӗрентӳпе пурӑнман кашни ҫынах Турӑсӑр тӑрса юлать. Христос вӗрентӗвӗпе пурӑнаканӑн Ашшӗ те, Ывӑлӗ те пур. [10] Кам та кам сирӗн патӑра ҫав вӗрентӗве мар, урӑххине вӗрентме пырать, ӑна килӗре те ан кӗртӗр, хапӑл ан тӑвӑр. [11] Мӗншӗн тесен унашкал ҫынна хапӑл туни унӑн усал ӗҫне хутшӑнниех пулать.

*Юлашкинчен калани*

[12] Манӑн сирӗн патӑра ҫырса ямалли нумай, анчах та хут ҫине чернилпа ҫырнипех ҫырлахассӑм килмест. Сирӗн патӑра хам пырса ҫитессе, савӑнмалӑх куҫа-куҫӑн курса калаҫасса шанатӑп. [13] Турӑ суйласа илнӗ пӗртӑванун ачисем сана салам калаҫҫӗ. Аминь.